ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТĔРĔСЛЕВПЕ ШУТЛАВ ПАЛАТИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Тĕрĕслевпе шутлав палати çинчен" 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 58 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2011, 91 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 7 №-сем; 2014, 9 №; 2015, 5 №; 2016, 2 №; 2017, 3, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2 статьяна "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен" сăмахсем хыççăн ", федераци территорийĕсен" сăмахсем хушса хурас;

2) 4 статьяра:

а) çакăн пек çырса 4^1-мĕш пай хушса хурас:

"4^1. Тĕрĕслевпе шутлав палатин председателĕ хăйĕн полномочийĕсен срокĕ тухсан (полномочисем срокчен вĕçленнисĕр пуçне) Тĕрĕслевпе шутлав

палатин çĕнĕ председательне суйличчен хăйĕн полномочийĕсене малалла пурнăçласа пырать, анчах та виçĕ уйăхран ытла мар.";

ă) 6-мĕш пайăн иккĕмĕш абзацĕнче "сектор заведующийĕн, пай пуçлăхĕн" сăмахсене "сектор заведующийĕн, пай пуçлăхĕн çумĕн, управлени-ри пай пуçлăхĕн, пай пуçлăхĕн, управлени пуçлăхĕн" сăмахсемпе улăштарас;

3) 6 статьян 8-мĕш пайĕнче "Федерацин "Коррупципе кĕрешесси çинчен" 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕпе тата ытти" сăмахсене "Федерацин "Коррупципе кĕрешесси çинчен" 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕпе (малалла – Федерацин "Коррупципе кĕрешесси çинчен" саккунĕ) тата ытти" сăмахсемпе улăштарас;

4) 7 статьяна çакăн пек çырса 7-мĕш пай хушса хурас:

"7. Тĕрĕслевпе шутлав палатин Чăваш Республикин патшалăх должноçне йышăнакан должноçри çыннине Федераци саккунĕпе тата федерацин ытти саккунĕсемпе коррупципе кĕрешес тĕллевпе палăртнă чарусемпе пӳлӳсене, интерессен хирĕçӳлĕхне сирсе ярасси е йĕркене кĕртесси çинчен калакан требованисене пăхăнманшăн тата тивĕçсене пурнăçламаншăн явап тыттарассинчен çавнашкал чарусемпе пӳлӳсене тата требованисене пăхăнманни, тивĕçсене пурнăçламанни унран килмен сăлтавсемпе çыхăннине Федерацин "Коррупципе кĕрешесси çинчен" саккунĕн 13 статйин 3–6-мĕш пайĕсемпе пăхса хăварнă йĕркепе йышăннă чухне хăтараççĕ.";

5) 14 статьян 5-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

6) 15 статьяра:

а) 4^1-мĕш пайра "2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 5-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

7) 20 статьяра:

а) 1-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсемпе" сăмахсене "Чăваш Республикин патшалăх органĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 7-мĕш пайăн 5-мĕш пунктне çакăн пек çырса хурас:

"5) муниципалитет пĕрлĕхĕсен тĕрĕслевпе шутлав органĕсем е муниципалитет пĕрлĕхĕсен представительлĕ органĕсем ыйтнипе муниципалитет пĕрлĕхĕсен тĕрĕслевпе шутлав органĕсен ĕçне-хĕлне анализ тума тата вĕсен ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерес енĕпе сĕнӳсем пама, çавăн пекех муниципалитет пĕрлĕхĕсен представительлĕ органĕсем ыйтнипе муниципалитет пĕрлĕхĕн тĕрĕслевпе шутлав органĕн председателĕн должноçĕн кандидатури Федераци саккунĕпе палăртнă требованисене тивĕçлĕ пулни çинчен калакан заключени пама;";

8) 21 статьян 2-мĕш пайĕнче "тата вырнаçтарма" сăмахсене "е вырнаçтарма" сăмахсемпе улăштарас;

9) 23 статьяра:

а) 1-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"1. Тĕрĕслевпе шутлав палатин Чăваш Республикин патшалăх должноçне йышăнакан должноçри çыннисене укçа тӳлевĕ (укçа-тенкĕ енчен тытса тăрасси) тата ытти тӳлевсем, çулленхи тӳлевлĕ отпусксем, профессилле аталану, çав шутра хушма професси пĕлĕвĕ илесси, çавăн пекех Чăваш Республикин патшалăх должноçĕсене йышăнакан çынсем валли палăртнă пурлăх тата социаллă пулăшупа тивĕçтермелли ытти мерăсем енĕпе гаранти параççĕ.";

ă) 3-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕ
37 №